# Чĕрĕлĕх йышĕ кăштах улшăнать

**Республикăри сунар ресурсне шута илмелли хĕллехи тапхăра пĕтĕмлетнĕ. Унпа Чăваш Республикин сунарçăсемпе пулăссен патшалăх службин ертӳçи Владимир КУЗЮКОВ паллаштарать.**

– Вăл кăçалхи кăрлач-нарăс уйăхĕсенче иртрĕ, – терĕ Владимир Николаевич. – Вăрманпа уй-хир чĕр чунне юридици тытăмĕсемпе предпринимательсен аллинчи лаптăксенче сунар объекчĕпе усă куракансем, пурте кĕрсе çӳрекен территорире тата патшалăхăн сунар заказникĕсенче служба специалисчĕсем шутланă. Çак ĕçе сунарçăсене те явăçтарнă.

**– Вĕсен умне мĕнле тĕллев лартнă?**

– Шутлава май килнĕ таран ăнăçлă йĕркелеме, пĕлтĕрхи йăнăша тӳрлетме, ĕçе туллин пурнăçлама ыйтрăмăр. Шутлавçăсенчен 546 карточка йышăнтăмăр. Вĕсем сăнанă чĕр чунсен йĕрĕ пурĕ 5183 çухрăмпа танлашрĕ. Норматива тивĕçтермен карточкăсене пăрахăçланă. Хисепе палăртма федерацин «Центроохотконтроль» учрежденине 136 – пĕлтĕрхинчен нумайрах – ярса патăмăр. Унтан шутламалли коэффициентсем илтĕмĕр. Йыша вĕсемпе килĕшӳллĕн пĕтĕмлетрĕмĕр.

**– Пĕтĕмлетсе мĕн калатăр?**

– Чĕрнеллĕ чĕрĕлĕх хисепне тĕрĕсрех палăртма май килчĕ. Пăши нумай хухман, хир сысни, пăсара, сăсар, хир мулкачĕ, юс, кашкăр, карăк, ăсан, хир чăххи чакнă. Хир качаки, пакша, шурă мулкач, тилĕ, пăчăр хушăннă. Хисеп пĕчĕкленнине е пысăкланнине апатран, çанталăкран, ыттинчен килекен сăлтавсемпе ăнлантармалла. Пăсарана сунарçăсем тытмаççĕ. Çавăнпа вĕсене кайăкçăсем персе вĕлернипе йыш чакнă теме çук. Сăлтавĕ урăххинче.

Хăшĕ-пĕри хир сыснисен пĕр пайĕ кӳршĕ регионa куçса кайнă, çавăнпа кĕтӳ пĕчĕкленнĕ терĕ. Çакна тĕпчев йĕркелесе çирĕплетмен – пĕлместпĕр. Хир сысни Мари Элрен – Чăваш Ене, пирĕн патран Тутарстана е ытти регионa куçать. Вăл ăçта ытларах тытăнса тăрассине хăй çеç пĕлет.

Кашкăр сахалланнăшăн ан кулянăр. Ăна çиччĕ кăна шутланă пулсан та султалăкран 20-30 пулĕ. Вăл вăрман, уй-хир чĕрĕлĕхне çеç мар, килти выльăха та пĕтернине манар мар. Хир качаки хушăнни савăнтарать.

**– Ака уйăхĕ – сунар тапхăрĕ. Вăл еплерех пырать?**

– Патăрьел, Шăмăршă, Елчĕк районĕсенче 14-23-мĕшĕсенче, ытти районта 21-30-мĕшĕсенче иртет. Кайăк хура, кайăк кăвакала, ăсан аçине, кăрăпчака тытма сунарçăсене 10 кун çеç ирĕк паратпăр. Чăн та, вĕсене «Кедр» сунар хуçалăхĕн лаптăкĕнче тата пурте усă курмалли сунар вырăнĕнче пăшалтан персе е урăх меслетпе тытма юрамасть. Кăрăпчака тата кăвакал аçине – пиллĕкрен, хура – иккĕрен, ăсана пĕрререн ытла мар.

**– Чĕрĕлĕх тĕнчине пуянлатма мĕнлерех тĕллевсем лартатăр?**

– Пĕлтĕр Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕ хир сыснипе пăши йышне 4500 пуçа çитермелли програмăна çирĕплетрĕ. Ăна пурнăçлас тĕлĕшпе кашни сунар вырăнĕнче тумалли ĕçе палăртрăмăр. Республикăра 14 упа. Ăна Чăваш Республикин Хĕрлĕ кĕнекине кĕртнĕ: пăшалтан персе вĕлерме, ытти меслетпе тытма чарнă.

Республикăра çирĕм-çирĕм пилĕк çул ăтăр тата Европа шашки мĕн чухлĕ пурăннине шутламан. Кăçал палăртрăмăр. Иртнĕ çул Йĕпреç, Вăрнар, Шупашкар, Етĕрне, Пăрачкав районĕсенчи пурте усă куракан сунар вырăнĕсенчи хир сыснин, мулкач, чĕрнеллĕ ытти чĕр чун хисепне пысăклатас тĕллевпе апатлантарнă. Вĕсем республикăри çулсем урлă каçаççĕ, тепĕр чухне автомашина айне лекеççĕ. Чĕр чун çӳрекен тĕлте водительсене асăрхаттарма пĕлтерӳ хăми вырнаçтарас ыйтăва çĕклетпĕр. Ăна чылай çĕрте лартнă. Çапах – çителĕксĕр. Ку ĕçе малалла тăсатпăр. Пĕлтĕр Шупашкар шыв управне ĕрчетме 4 пин вĕт пулă – хулăн çамка – ятăмăр. Чĕрĕлĕх тĕнчине пуянлатас тĕлĕшпе ырă ытти ĕç тăватпăр.

■ **Юрий МИХАЙЛОВ калаçнă**

**Республикăри хĕллехи шутлав меслечĕпе палăртнă вăрман тата уй-хир чĕр чунĕн йышĕ**

| | Сунар ресурсĕ | | | | |
|---|---|---|---|---|---|
| | 2009 ç. | 2010 ç. | 2011 ç. | 2012 ç. | Кăçалхине пĕлтĕрхипе танлаштарни,% |
| Пăсара | 264 | 148 | 170 | 132 | 77,6 |
| Пакша | 10472 | 6018 | 4445 | 4952 | 111,4 |
| Пăши | 538 | 546 | 855 | 825 | 96,5 |
| Хир сысни | 1527 | 1952 | 1587 | 1036 | 65,3 |
| Сăсар | 1186 | 969 | 881 | 743 | 84,3 |
| Шурă мулкач | 3674 | 2165 | 1747 | 2839 | 162,5 |
| Хир мулкачĕ | 1643 | 1815 | 2064 | 1892 | 91,7 |
| Тилĕ | 1917 | 1724 | 1913 | 1985 | 103,8 |
| Юс | 118 | 29 | 27 | 10 | 37,0 |
| Çӳлевĕç | 13 | 13 | 7 | 7 | 100,0 |
| Кашкăр | 30 | 20 | 24 | 7 | 29,2 |
| Карăк | 1484 | 990 | 775 | 766 | 98,8 |
| Ăсан | 8036 | 10860 | 10840 | 8873 | 81,8 |
| Пăчăр | 8595 | 10171 | 4576 | 7891 | 172,4 |
| Хир чăххи | 29746 | 40782 | 27137 | 7641 | 28,2 |
| Хир качаки | 38 | 28 | 29 | 75 | 258,6 |